Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2012 · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2011 · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII

*25 (7986) №* ✻ *Юн кун, 2012 çулхи ака (апрель) уйăхĕн 4-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

## Тухăç никĕсĕнче – пахалăхлă вăрлăх

Çур акине хатĕрленсе



яхăн хатĕрлерĕмĕр те ĕнтĕ, – каласа параççĕ «Петкус» агрегатпа вăрлăх тасатса сортлакан Александр Андреев юсавçă слесарьпе Роза Сорокина ĕçчен. 1976 çултанпа хуçалăхра тăрăшакан Владимир Егоров энергетик та кунтах, агрегатпа ытти техника хатĕрĕ мĕнле ĕçленине пăхсах тăрать.

Хуçалăх ертӳçипе Виталий Семеновпа калаçатпăр. Кăçал хуçалăхра çур аки ĕçĕсене пĕтĕмпе 600 гектар лаптăк çинче туса ирттерме палăртнă. Çурхи тĕш тырă культурисене 450 гектар акса хăвармалла. Вăл шутран çурхи тулă 50 гектар, урпа 400 гектар çинче пулĕ. Пĕр çул ӳсекен курăксене выльăх апачлĕх 150 гектар акма пăхнă.

Çут çанталăкăн хăйĕн саккунĕ. Кăçал çурхи ĕçсем каярах юлса килесси куç кĕрет. Апрель уйăхне кĕтĕмĕр пулин те çанталăк ăшăтма васкамасть. Апла пулин те ял çынни, çĕр ĕçченĕ паян ыранхи кунпа, çурхи ĕç çи ыйтăвĕпе пурăнать. Мĕншĕн тесен кĕрхи тухăç çурхи акасуха ĕçĕсене мĕнле хатĕрленсе туса ирттернипе тӳрремĕнех çыхăнние аван ăнланать вăл.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: хуçалăхри чи ăста механизаторсенчен пĕри – Михаил Атласкин; Владимир Егоров энергетик тата тырă тасатакансем Александр Андреевпа Роза Сорокина ĕçре тăрăшуллă.**



Çак чăнлăха асра тытма тăрăшаççĕ Е. Андреев ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăхра. Çавна май çурхи тĕш тырă культурисен вăрлăхне ответлă тапхăр – ака ĕçĕсем пуçăниччен – аласа кондицие лартас ĕçсене уйăха яхăн каяллах тытăннă.

Унччен çанталăк сивĕрех тăчĕ, çил-тăман та вĕçтерчĕ. Апла пулин те çанталăк условийĕсене пăхмасăрах вăрлăх хатĕрлекенсем хĕрӳ ĕçре. Михаил Атласкин тиесе панă тырра кĕлетрен вăрлăх сортлакансем патне турттарать. Хăйне шанса панă «Беларусь» трактора тĕрĕс-тĕкел ĕçлеттерет. Сăмах май 1971 çултанпа вăл трактор рулĕ умĕнче.

– Халĕ урпа вăрлăхне аласа сортлассипе ĕçлетпĕр. 100 тоннăна

Район администрацийĕнче

## Хисеп грамотипе чысланă

***Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2012 çулхи пуш уйăхĕн 23-мĕшĕнчи тата 26-мĕшĕнчи 276, 281 номерлĕ йышăнăвĕсемпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе çак ĕçченсене наградăланă:***

1. Нумай çул хушши ял хуçалăх производствинче тухăçлă ĕçленĕшĕн «Свобода» хуçалăхăн Çатракассинчи сĕт фермин ветеринари фельдшерне **Галина Алексеевна ГРИГОРЬЕВĂНА**;

– «Свобода» хуçалăхăн 1-мĕш уй-хир бригадин ĕçченне **Галина Арефьевна СТЕПАНОВĂНА.**

2. Библиотека сферинче нумай çул ăнăçлă вăй хунăшăн Çатракасси ял тăрăхĕн «Çатракассинчи информаципе культура центрĕ» МБУК филиалĕн – Çатракасси ял библиотекин заведующине **Вена Петровна КОНУЗИНĂНА;**

– Шетмĕпуç ял тăрăхĕн «Шетмĕпусĕнчи информаципе культура центрĕ» МБУК филиалĕн – Шетмĕпуç ял библиотекин заведующине **Валентина Владимировна НИКИТИНĂНА.**

3. Культура сферинче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн Катькас ял тăрăхĕн «Катькасри информаципе культура центрĕ» МБУК филиалĕн – Калайкассинчи Культура çуртĕн художество пултарулăх ертӳçине **Иосиф Александрович АЛЕКСАНДРОВА**;

– «Муркашри ачасен Ф.С. Васильев ячĕллĕ искусство шкулĕн» вĕрентекенне **Луиза Николаевна ЕФИМОВĂНА**.

4. Нумай çул хушши ял хуçалăх производствинче тухăçлă ĕçленĕшĕн «Путь Ильича» агрофирма» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн ĕнесене машинăпа сăвакан операторне **Нина Владимировна ПАВЛОВĂНА**.

Районта

## Ăста вĕрентекенсене палăртрĕç

***Иртнĕ эрнере районти «Чи лайăх класс ертӳçи» тата хушма пĕлӳ паракан педагогсен ăсталăх конкурсĕсен çĕнтерӳçисене палăртрĕç.***

Кирек епле конкурс та унта хутшăнакансене тĕрлĕ енлĕ хаклама май парать. Кунпа пĕрлех çĕнĕ вăй-хăват парнелет, ĕçе ырă улшăнусем кĕртме хистет. Асăннă конкурссенче кашни вĕрентекен хăйĕн ĕç программипе, ăсталăхĕпе тĕрлĕ енлĕн паллаштарчĕ.

«Чи лайăх класс ертӳçи» конкурсра çĕнтерӳçĕсене вĕрентекен хăш сыпăкри класпа ĕçленине кура палăртрĕç. Республика шайĕнче Муркаш районĕн чысне вара çаксем хӳтĕлĕç: Нискассинчи вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентекен Полина Петровна Кожевникова, Чуманкассинчи вăтам шкулта ĕçлекен Валентина Геннадьевна Васильева (вăтам сыпăк) тата Москакассинчи вăтам шкулта ĕçлекен Елена Мефодьевна Захарова (аслă сыпăк).

Хушма пĕлӳ паракан педагогсен ăсталăх конкурсĕнче Çамрăк техниксен станцийĕнче, ача-пăча пултарулăх çуртĕнче тата Шурчари тĕп шкулта вăй хуракан педагогсем пурĕ 13-ĕн хутшăнчĕç. Вĕсем хăйсем хатĕрленĕ куравсемпе паллаштарчĕç, килти ĕç те ăста кăтартса парĕç. Жюри палăртнă тăрăх çĕнтерӳçĕ ятне Альбина Юрьевна Герасимова (Çамрăк техниксен станцийĕ) тивĕçрĕ.

**Хамăр инф.**

Фермерсем валли

## Тĕллевлĕ программăна хутшăнма

Раççей Федерацийĕнчи пекех Чăваш Енре те ял хуçалăх аталанăвĕ çине тимлĕрех пăхма пуçлани сисĕнет. Çакă çĕр-шыв пуласлăхĕ пулни пирки иккĕленӳ çук. Çавăнпа та хресченсем çĕр-шыв ертӳçисем çул паракан çĕнĕлĕхсене алла илессипе çанă тавăрсах тăрăшаççĕ. Акă юлашки вăхăтра çĕр ĕç ведомствинчи «Ĕç пуçаракан фермерсене патшалăх пулăшăвĕ парасси» тĕллевлĕ программа пирки калаçу пырать.

Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерстви «Ĕç пуçаракан фермерсене 2012–2014 çулсенче патшалăх пулăшăвĕ парасси» тĕллевлĕ программăна пурнăçа кĕртме ирттерекен конкурса документсен тăратассине пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа ака уйăхĕн 26-мĕшĕнчен çирĕплетнĕччĕ. Çавна май документсене конкурса маларах тăратнисен çĕнĕрен регистрациленмелли пирки пĕлтереççĕ.

**Хамăр инф.**

«Шурă ромашка» акци

## Туберкулезран асăрханмалла

***Мартăн 24-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнче Туберкулеза хирĕç кĕрешмелли куна паллă турĕ. Çак кун пулни пирре пурне те туберкулез чирĕн хăрушлăхĕ пирки тепĕр хут аса илтерет. Социаллă хăрушă чире сарăлма парас мар тесе кашни çулах Туберкулеза хирĕç кĕрешмелли кунччен маларах, мартăн 20-мĕшĕнче, «Шурă ромашка» акци пуçланать. Ку кăçал та çаплах. Акци пĕр уйăх пырать.***

Тĕнче питĕ хăвăрт аталанать: нанотехнологи, компьютер, модернизаци... Апла пулин те туберкулез чирĕн хăрушлăхĕ чакмасть. Çапах та ăна хирĕç кĕрешессинче çĕршывра кăна мар, пирĕн республикăра та ырă утăмсем тăваççĕ.

Акă акци пуçланас умĕн эпир, республикăри фтизиатрсем, конференцие пухăнса калаçрăмăр. Унта çак хăрушă чирпе вилесси пирĕн республикăра икĕ хут чакнине палăртрĕç. Кунсăр пуçне туберкулезпа чирлесси, чир сарăлнă тĕслĕхсем сахалланнине те каларĕç.

Пирĕн районта ку тĕлĕшпе лару-тăру мĕнлерех-ха? Иртнĕ çулталăкра туберкулезпа чирленĕрен вилни тата чире шала кайнă хыççăн тин тупса палăртнă тĕслĕхсем пулман, вăхăтра тупса палăртнă. Чир пурринче çĕнĕрен палăртнă тĕслĕхсем те малтанхинчен сахалрах.

Çынсем флюорографи тĕрĕслевне вăхăтра ирттересси паян вара тĕп ыйту пулса тăрать. Мĕншĕн тесен çак тĕрĕслев чир паллисене тӳрех тупса палăртма май парать. Çавăнпа та кашни çыннăн çулталăкра пĕрре флюорографи тĕрĕслевне тумаллах. Аякри вырăнсене ĕçлеме тухса çӳрекенсене хăйсен сывлăхĕ çине уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрма ыйтас килет. Тĕрлĕ лару-тăрура пурăнма, ĕçлеме тивет вĕсен. Апла пулсан флюорографи кабинетне килсе тĕрĕсленни ытлашши пулмасть.

Ватă çынсене те флюорографи тĕрĕслевĕ тума Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти больницăсене (шăмат кунсенче те ĕçлеççĕ) килме ыйтса калатпăр. Пĕччен пурăнакансене вара медицина ĕçченĕсем те, вĕсен тăванĕсем те, кӳршисем те тимлĕх уйăрасса шанас килет.

Чире вăхăтра тупса палăртни, апла пулсан вăхăтра сиплеме тытăнни пуриншĕн те лайăх кăна. Чир хăрушлăхĕ пирки нумайăшĕ пĕлет. Апла пулин те хаçатăн çитес номерĕсенче туберкулез пирки тĕплĕнрех калаçăпăр.

**О. МИХАЙЛОВА,**
**фтизиатр врач.**

Ыйтусем кĕтетпĕр

## Почта çыхăнăвĕн ĕçĕ тивĕçтерет-и?

Эсир хаçат-журнал вăхăтра илетĕр-и? Çыру-телеграмма сирĕн пата çитет-и? Почта çыхăнăвĕн ĕçĕхĕлĕ сире тивĕçтерет-и?

Раççей почтин Чăваш филиалĕн управленийĕ тата районти почтамт райхаçат редакцийĕпе тӳрĕ лини ирттереççĕ. Почта çыхăнăвĕн ĕçĕпе çыхăннă ыйтусене «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийе çырупа ярса парăр пе 62-2-82 номерлĕ телефонпа шăнкăравласа пĕлтерĕр.

Сирĕн ыйтусене апрелĕн 13-мĕшĕччен кĕтетпĕр. Вĕсене почта çыхăнăвĕн ĕçченĕсем хуравланă хыççăн отчета хаçатра пичетлесе кăларăпăр.

Сирĕнтен ыйтусем кĕтетпĕр.

Кĕскен

## 100-мĕш ача çуралчĕ

Мартăн 30-мĕшĕнче районти ЗАГС пайĕнче 100-мĕш ача çуралнине регистрациленĕ. Телейлĕ пепке – Пиккикасси ялĕнчи Константиновсен ывăлĕ. Егор ят «çĕр ĕçлекен» тенине пĕлтерет. Апла ăна ĕçчен те хастар пулма сунатпăр.

Çырăнтару – 2012

## ХАКЛĂ ВУЛАКАНĂМ!

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июльтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ. 6 уйăха çырăнмалли хак – 204 тенкĕ.**

**Вулакансене пĕлтерĕттĕмĕр, июль уйăхĕнчен шăмат кунсенчи кăларăм хальхи пек 6 страницăпа мар, 8 страницăпа тухма пуçлать. Райхаçат редакцийĕ.**

# Цивилизаци пирĕн пата çитĕ-ши?

**Ял тăрăхĕсенче**

Эпир Оринин ял тăрăхне кĕрекен Мулкачкасси ялĕнче пурăнатпăр. Тĕрĕсрех каласан – çак ялти Уралекки урамĕнче. Ялта 5 урам пулсан, Центральная урамра кăна асфальт сарнă. Ку урамра пурăнакансем патне цивилизаци çитнĕ темелле. Ытти 4 урамра йĕркеллĕ çул çук. Апла пулин те Центральная урама çывăх урамсенче пурăнакансем «аслă çул» çине тухма пултараççĕ-ха. Анчах Уралекки урамĕ çырма тепĕр енче вырнаçнă май пирĕн кун пек «ырлăха» кĕтмелли çук.

Ялĕпе 140 кил пулсан, пирĕн урамра 50 уйрăм хуçалăх. Вĕсенчен çуррине яхăн нумай пулмасть çĕнĕрен çурт-йĕр çавăрнисем. Типĕ çу кунĕсенче тата хĕллехи вăхăтра аптăрамастпăр-ха, пурăнма пулать. Анчах та çурхи шыв-шур е кĕрхи йĕпе-сапа пуçлансан вара пурнăç пĕтсе килчĕ темелле. Тракторсăр ан та пырса кĕр пирĕн урама. Çăрăнать те çăрăнать пылчăк.

Урамне пырса кĕмесĕр вара майĕ те çук. Мĕншĕн тесен çăва çине пирĕн урам хушшипе çӳреме тивет. Çын вилес пулсан тупăка çăва çине 7 ялтан çак урампа илсе каймалла. Ытти чухне те урама транспорт хатĕрĕпе пачах кĕрсе тухмасăр май килмест.

Депутатсен ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕсене те суйлатпăр ĕнтĕ, старостăсем те пур. Вĕсем пирĕн нуша пирки курман-илтмен мар. Анчах та урамра хăçан пылчăк çăрăнма пăрахасси пирки ĕмĕтленмелли кăна юлать.

Ял çыннисемпе иртterekен тĕл пулусенче, пухусенче çул ыйтăвне пĕр хут кăна çĕклемен. Çул туса паратпăр тесе шантараççĕ те ĕçĕ çавăнпа вĕçленет.

Эпир ăнланатпăр, хальхи вăхăтра асфальт çул тăвасси питех те хаклă ĕç. Эпир асфальт сарма ыйтмастпăр та. Анчах та вак чул та пулин сарса урам хушшине йĕрке кĕртесехчĕ. Унсăрăн путăк-çурăк вырăнсене хальхи пек тăпра тăкса «сапласа» тухнинчен усси нимĕн те çук. Ку тăпрана çурхи шыв-шур, çумăр пĕтĕмпех çырмана юхтарса каять.

Екремекки урамĕнче пурăнакансем те пирĕн пекех нуша кураççĕ. Ку урамра 7 кил. Çулĕ çук. Çитменнине урама кĕпер урлă каçса çӳремелле. Кĕперĕ вара кивелсе çитнĕ ĕнтĕ. Ăна тахçанах юсама вăхăт.

Çапла, ыйтусем çук мар. Анчах та вĕсене никам та айккинчен килсе татса парас çук. Вырăнти ыйтусем тĕлĕшпе хамăрăнах, вырăнти влаç органĕнех тăрăшас пулать. Çавăнпа та малашне сăмах панипех çырлахас марччĕ. Пирĕн урамра пурăнакансен ыйтăвĕ асăрхамасăр юлмĕ тесе питĕ шанас килет.

**Урамра пурăнакансем ыйтнипе Евгенийпе Юрий СТОЛЯРОВСЕМ.**

# Чăн-чăн арçын ĕçĕ

**Çар службине – контрактпа**

Çар ретĕнче службăра пуласси – Раççей Федерацийĕн кашни гражданинĕн Конституци тивĕçĕ тата хисеплĕ чысĕ. ЧР Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсенчи пайĕ службăран таврăннă тата халĕ запасри граждансене контрактпа çар службине кайма илесси пирки пĕлтерет.

Кандидатсене чи малтанах Центральнăй çар округĕн çар чаçĕсене тата Таджикистан Республикинчи 201-мĕш çар базине службăна яраççĕ. Центрти çар округĕнче çак вырăнсенче службăра пулма тивет: Тольяти хули, Самара облаçĕнчи Рощинский поселок, Екатеринбург, Новосибирск, Челябинск облаçĕнчи Чебаркуль, Абакан хулисем; ВДВ çар чаçĕсем Ульяновск, Иваново, Тула, Псков, Ставрополь хулисенче вырнаçнă.

Казарма общежитийĕсенче пурăнмалла, çемьеллисене служба хваттерĕпе тивĕçтереççĕ. Ценральнăй çар округĕн çар чаçĕсенче службăра тăракансем уйăхне 18 пин тенкĕрен, Таджикистан Республикинче 28 пин тенкĕрен кая мар шалу илеççĕ.

Чи малтанах «С», «Д», «Е» категорисем пур водительсене йышăнаççĕ. Ĕç стажĕ 1 çултан кая мар тата службăна кайма сывлăх тивĕçтерни кирлĕ. Водитель удостоверенийĕ çуккисене çар специальноçĕсемпе Таджикистан Республикинчи 201-мĕш çар базине службăна илеççĕ. 1 уйăх службăра пулни 3 уйăх шутне кĕрет. Çакă вăл пулас пенси калăпăшĕ çине витĕм кӳрет.

МВД, МЧС, ФСБ çар чаçĕсене те службăна кайма пулать.

Кандидатсем тĕлĕшпе требованисем çакăн пек:

– 30 çултан аслă мар;

– «С», «Д», «Е» категориллĕ водитель удостоверенийĕ пурри;

– çар службине кайма сывлăх тивĕçтерни;

– судпа айăпланманни.

Контрактпа çар службинче пулма РФ Оборона министерствин вĕренӳ çар заведенийĕсенче сержантсемпе старшинасене вĕрентсе хатĕрлессине йĕркеленĕ. Кандидатсене 2012 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕччен суйласа илеççĕ. 2 çул та 10 уйăх вĕренмелле. 3 хут тӳлевсĕр апатлантараççĕ, пурăнма вырăн тупса параççĕ, тумтирпе тивĕçтереççĕ, уйăхне 15 пин тенкĕ таран стипенди тӳлеççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсем валли требованисем:

– 24 çултан аслă мар;

– 11 класс вĕренсе пĕтерсе вăтам пĕлӳ илни (ЕГЭ тытни);

– сывлăх тĕлĕшпе службăна кайма юрăхли;

– судпа айăпланманни;

– административлă майпа айăпланманни.

Контрактпа службăна кайма е вĕренме кĕме кăмăл пуррисене ЧР Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсенчи пайĕнче кĕтетпĕр (16, 17/2, 15/1, 12 № кабинетсем). Тел.: (8-835-41); 62-1-89; 62-7-01.

**А. КОЧУРОВ,**
**ЧР Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсенчи пайĕн пуçлăхĕ.**

**Редакци почтинчен**

# Çыру йĕрĕпе

**«Елшикпа Чемей хушшинчи плотина пуçĕнче шыв тăрать, уçакан çук. Г. Кожевников тракторсем килессе шантарать. Чемей ялне каçма çул çук. Эпир утрав çинчи пек пурăнатпăр. Плотина пуçĕнче çур метр шыв тăрать. Турай енне кайма хĕлĕпе те çул пулман.**

**ФЕРАПОНТОВ».**

***Ку ыйтупа эпĕ район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн специалисчĕпе Н. ЗВОНКОВПА калаçрăм.***

– Ку вырăнта эпир çак кунсенче ĕç ушкăнĕпе пĕрле пулнă, хăш-пĕр ĕçе йĕркеленĕ. Асăннă çулйĕре «Жилкомгарантия» чикĕллĕ яваплăхлă пĕрлешӳ пăхса тăрать. Техника юсавсăррине пула çула юртан вăхăтра тасатайманни пулнă, халĕ юра тĕкнĕ. Плотина пуçĕнче пухăннă шыва уçасси те асăннă организаци тивĕçĕ. Çавна май шыв уçассине те йĕркеленĕ, – терĕ вăл.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

**Районти администраци сайчĕ влаç органĕсен конструктор порталĕнче – 10 çул**

# «Эпир ĕç-хĕл уççăнлăхне тивĕçтеретпĕр»

***Район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пайĕ 1998 çулхи январĕн 5-мĕшĕнче «çуралнă». Пай пуçлăхĕ Валерий Лаврентьев çине тăнипе республикăра малтисенчен пĕри район сайтне йĕркеленĕ. Республикăра Интернетра районти 19 ял администрацийĕн тата шкулсен пĕрремĕш сайчĕсем кун çути курнă. 2002 çулта cap.ru порталĕнче Муркаш район администрацийĕн официаллă сайчĕ уçăлнă. Унта пĕрремĕш хыпара 2002 çулхи апрелĕн 2-мĕшĕнче вырнаçтарнă. Район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пайĕн пуçлăхĕпе В.Г. ЛАВРЕНТЬЕВПА тĕл пулнă май район администрацийĕн сайчĕн аталану тапхăрне сăнласа пама ыйтрăм:***

– Официаллă сайта вырнаçтарнă пĕрремĕш хыпар халĕ те асра. Ку вăл район администрацийĕн пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пайĕ çурт-йĕр фончĕн çурхи тĕрĕслевне тата 2002 çулта капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттерме титул списокĕ хатĕрлеме тытăннипе çыхăннă хыпарччĕ.

Районăн официаллă сайчĕ ерипен аталанса пычĕ. 2006 çулта порталта 16 ял тăрăхĕн сайтне йĕркелерĕмĕр. Паянхи куна район порталĕ районти 130 предприятипе организаци сайтне пĕрлештерсе тăрать. Пай сотрудникĕсем çак сайтсене йĕркелекенсене вĕçĕмех техникăлла тата методика тĕлĕшĕнчен пулăшу параççĕ.

Иртнĕ 10 çул хушшинче Муркаш районĕн официаллă сайчĕ хăйĕн сăн-сăпачĕ тата шалти тытăмĕ енĕпе те чылай енчен улшăнчĕ. Сайта вырнаçтаракан хыпарсемпе паллашас текенсем сахал мар. Чылайăшĕ районăн экономикăпа социаллă аталанăвĕн кăтартăвĕсемпе, культура тата спорт хыпарĕсемпе интересленет. Район администрацийĕн ĕç-хĕлне çутатнă май нумай информацисемпе пĕрле фотоматериалсем вырнаçтаратпăр. Çапла вара уйрăм самантсем пирки вуласа пĕлме кăна мар, куçпа курса паллашма та май пур.

2009 çултанпа пирĕн пай видеофильмсем те ӳкерме пуçăнчĕ. Унта иртсе пыракан çулталăкри уйрăмах пĕлтерĕшлĕ событисем пирки каласа паратпăр. 2010 çулта пуçласа порталта «Видеохыпарсем» ятпа çĕнĕ пай йĕркелерĕмĕр.

Районăн официаллă сайчĕ республикăра лайăххисен шутĕнче. 2011 çул итогĕсемпе районсемпе хуласен официаллă сайчĕсем хушшинче 2-мĕш вырăн йышăнма пултартăмăр. Çакна чи малтанах район администрацийĕн пайĕсемпе службисен информатизацишĕн ответлă пулса тăракан нумай специалисчĕсен кулленхи ырми-канми ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăнтармалла.

Район сайтĕнче райадминистраци ĕç-хĕлне уççăн кăтартма тăрăшатпăр. Сайтра официаллă информацие кашни сехетре çĕнетсе тăратпăр. Район администрацийĕн сайтĕнче вырнаçтарнă информацисемпе районти тата республикăри массăллă информаци хатĕрĕсем те час-часах усă кураççĕ.

Сайта кĕрекенсене унăн дизайнĕ те илĕртет. Унпа паллашакансен шутĕнче хамăр çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче пурăнакансем кăна мар, ют çĕр-шывсенче пурăнакансем те сахал мар. Уйăхсерен районăн официаллă сайтне 80–120 пин çын кĕрет.

Муниципаллă управленишĕн информаципе коммуникаци технологийĕсене пурнăçа кĕртнин пĕлтерĕшĕ çултан-çул пысăкрах та пысăкрах. 2011 çулта, тĕпрен илсен, эпир электронлă услугăсем парассипе, патшалăх тата муниципаллă услугăсем парасси пирки сайтра информаци вырнаçтарассипе çыхăннă ĕçсен пĕрремĕш тапхăрне вĕçлерĕмĕр темелле. Çывăх вăхăтрах çынсем влаç органĕ е уйрăм гражданин ку услугăна мĕнле пурнăçлани пирки информацие влаç органне пымасăрах тĕрĕслесе тăма, портал урлă патшалăх услугипе усă курма пултарĕç.

Малашлăхри пирĕн задача – çыхăну каналĕсен пахалăхне май пур таран лайăхлатасси, ялсенчи АТС-сем таран оптоволоконнăй линисем ĕçе кĕртесси, Муркашра тата Мăн Сĕнтĕрте пурăнакансен çурчĕсем патне çити оптоволоконнăй кабель сетне йĕркелесси, район территорийĕнче цифрăллă телевидение йĕркелеме пулăшасси, районти Интернет телевиденине тăвасси, районти пур бюджет учрежденийĕсенче те канцелярипе çыру ĕçĕсене электронлă майпа пурнăçлассине ĕçе кĕртесси. Мĕн палăртнине пурнăçа кĕртме пирĕн майсем çук мар.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

**Хушу**

# Татах 85 çын тивĕçнĕ

***ЧР Министрсен Кабинечĕ 2012 çулхи мартăн 28-мĕшĕнче 159-р № хушу кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн республикăри граждансен татах тепĕр ушкăнне ĕç стажне кура «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят панине çирĕплетнĕ. Вăл шутран Муркаш районĕнчен:***

Александрова Елизавета Андреевна (Мăн Сĕнтĕр)
Александрова Любовь Витальевна (Муркаш)
Алексеева Людмила Ивановна (Турхан)
Барминова Фаина Яковлевна (Муркаш)
Бронин Арсентий Игнатьевич (Вăрманкасси)
Бутурнова Валентина Германовна (Кăпас)
Быкова Елизавета Егоровна (Чемей)
Вершкова Зоя Григорьевна (Ойкас)
Водникова Елизавета Андрониковна (Турай)
Вязова Ирина Ильинична (Атапай)
Григорьев Егор Григорьевич (Вăрманкасси)
Григорьева Валентина Тимофеевна (Кив Шоккăн)
Димитриева Тамара Николаевна (Елача)
Донскова Нина Августовна (Çатракасси)
Ерцева Зоя Петровна (Мăн Сĕнтĕр)
Ершова Ольга Тимофеевна (Хорнуй)
Ефимова Евросиния Ильинична (Кив Шоккăн)
Жеколдина Юлия Яковлевна (Тушкасси)
Зайцева Людмила Андреевна (Сентимĕр)
Замкова Екатерина Ильинична (Атапай)
Захарова Людмила Георгиевна (Çĕмĕртлĕх Чемей)
Звонкова Елена Николаевна (Шерĕк)
Иванова Валентина Гурьевна (Карамалькасси)
Иванова Елена Борисовна (Ахмане)
Иванова Елена Васильевна (Москакасси)
Иванова Раиса Ивановна (Тушкасси)
Иванова Эльвира Николаевна (Карманкасси)
Игрова Валентина Васильевна (Калмăккасси)
Илларионов Меркурий Илларионович (Кĕртекасси)
Иштудова Людмила Павловна (Юнкă)
Казакова Зоя Леонидовна (Тушкасси)
Кириллова Зинаида Димитриевна (Чуманкасси)
Кириллова Лидия Семеновна (Тушкасси)
Кириллова Юра Александровна (Тушкасси)
Князева Галина Михайловна (Мăн Шашкар)
Колбасова Зоя Николаевна (Сентимĕр)
Кольцова Ирина Яковлевна (Ярак)
Крылов Виталий Владимирович (Хуракасси выççăлкки)
Кудашова Валентина Терентьевна (Шурча)
Кузьмина Александра Ивановна (Çĕньял Муркаш)
Кузьмина Ираида Александровна (Йӳçкасси)
Лебедев Виталий Иванович (Мăн Шашкар)
Лебедева Христина Ивановна (Мăн Шашкар)
Леонидова Нина Викторовна (Çаранçырми)
Лукоянов Александр Гаврилович (Мемеккасси)
Миронова Анна Афанасьевна (Муркаш)
Михайлова Галина Михайловна (Анаткасси)
Михайлова Зинаида Алексеевна (Муркаш)
Моисеева Валентина Емельяновна (Шомик)
Морозова Естолия Порфирьевна (Тренккă)
Мухин Николай Иванович (Вăрманкасси)
Николаев Владимир Егорович (Шомик)
Николаева Клавдия Андреевна (Тушкасси)
Николаева Мария Филипповна (Шаптак)
Орлова Римма Николаевна (Турай)
Павлов Юрий Павлович (Вăрманкасси)
Павлова Екатерина Михайловна (Шурча)
Павлова Юлия Ильинична (Нискасси)
Палкин Геннадий Корнилович (Çĕн Тăмлай)
Палкина Мила Тихоновна (Çĕн Тăмлай)
Паргеева Манефа Илларионовна (Итакачкасси)
Перлова Людмила Владимировна (Муркаш)
Петрова Анна Анатольевна (Йӳçкасси)
Петрова Валентина Семеновна (Вăрманкасси)
Полякова Людмила Павловна (Мăн Сĕнтĕр)
Прохорова Иульяна Георгиевна (Пăсăрман)
Сапожникова Роза Тимофеевна (Çатракасси)
Селюшкина Валентина Матвеевна (Юнкă)
Сергеева Нина Ильинична (Тури Панкли)
Силов Порфирий Никитич (Ярапайкасси)
Соловьева Ольга Васильевна (Кашмаш)
Сорокина Фекла Павловна (Муркаш)
Ступина Людмила Алексеевна (Çеменкасси)
Сурина Валентина Васильевна (Вăрманкасси)
Сылгачева Римма Ильинична (Шомик)
Тимофеева Галина Васильевна (Муркаш)
Тимофеева Юлия Николаевна (Тури Пнкли)
Уткина Александра Григорьевна (Мулкачкасси)
Фадеева Зоя Иосифовна (Шурча)
Федоров Геннадий Пантелеймонович (Чуманкасси)
Федорова Маргарита Дмитриевна (Вăрманкасси)
Филиппов Дмитрий Филиппович (Анаткасси)
Филиппова Любовь Васильевна (Кĕçĕн Чураш)
Хромова Тамара Александровна (Йӳтĕркасси)
Шишкова Тамара Серафимовна(Хорнуй)

**Асăрхаттарни: «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ çӳлте асăннă граждансене удостоверенисене савăнăçлă лару-тăрура район администрацийĕнче апрелĕн 6-мĕшĕнче 10 сехетре параççĕ.**

**Вулакан çырăвĕ**

# Çав çулсем асрах

Эпĕ çамрăк чухне Муркаш районĕнче ĕçленĕ, пурăннă. Халĕ вара ватлăх çулĕсенче Мускавра пурăнатăп. Апла пулин те тăван енпе çыхăннă çамрăклăх çулĕсем асран тухмаççĕ. Халĕ те район пурнăçĕпе интересленсех тăратăп. Ку енĕпе вара мана районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат пысăк пулăшу кӳрет. Кашнинчех унăн черетлĕ номерĕпе интересленсе паллашатăп.

Хам палланă, пĕлнĕ ентешсене яланах ырă туйăмсемпе аса илетĕп. Вĕсенчен пĕри – ырă кăмăллă Вера Самушкова. Вера Васильевна Мăн Сĕнтĕр больницинче вăй хурать. Чирлисемпе вăл яланах вашават, пуринпе те пĕр чĕлхе тупма пултарать. Чăннипех хисепе тивĕç çын.

Нумаях пулмасть вара вăл хăйĕн çуралнă кунне паллă турĕ. Çавна май эпĕ ăна яланах ырă кăмăл, çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал сунатăп.

**К. ТРОИЦКАЯ.**
Мускав хули.

# Тăван çĕре пулас ăрусем валли те упрар

**Сăмах – агронома**

Çăкăртан асли çук тесе халăхра ахальтен каламан. Шел пулин те паянхи пурнăçра эпир çак чăнлăха магазинсенчи сентресем тĕрлĕ йышши апат-çимĕç йăтăнса ларнипе танлаштаратпăр. Хамăр вара вĕсене епле туса кăларнипе те, вĕсенчен ытларахăшĕ çисен пирĕн организма сиен кӳме пултарнине те пĕлместпĕр тата çакăнпа интереслenместпĕр те. Малашне те кун пекех пурăнсан ăçта кайса тухма пулать-ха? Паянхи куна эпир çулсерен икĕ миллион тоннăна яхăн аш-какай хĕрĕх ытла патшалăхран туянатпăр. Мĕн кăна илсе килмеççĕ пулĕ пирĕн патшалăхăмăра – чăх тукмакĕнчен пуçласа кенгурупа буйвол ашĕ таранах.

Çак продукцие пăхатăп та чун ыратать, лайăх вăхăтсене аса илсен куççуль тухать. Çав вăхăтрах йĕриттавралла тинкеретĕн та мĕн чухлĕ çĕр çум айĕнче выртать, мĕн чухлĕ ферма ишĕлсе ларать, мĕн чухлĕ ытти производство хуралти юхăнать? Акса-туса илекен çĕрсем çинче те агрономи наукине пăхăнса ĕçлемеççĕ. Çак çитменлĕх уйрăмах тин кăна йĕркеленнĕ фермер хуçалăхĕсенче лайăх курăнать. Вĕсем чылай чух пусă çаврăнăш мĕнне те, картограммăсемпе усă курмаллине те пĕлмеççĕ пулĕ тесе шутлатăп. Вĕсен юратнă ял хуçалăх культурисем – тулă тата урпа.

Нумаях та пулмасть, эпир ĕçленĕ вăхăтра, пусă çаврăнăшĕсене çирĕп пăхăнса, органикăллă тата минераллă удобренисемпе картограммăсем тăрăх пăхса тĕрĕс пĕлсе усă куратчĕç. Çĕр пулăхлăхне ӳстерсе пырасси пирки тимлесе ытатчĕç. Ял хуçалăх управленийĕн специалисчĕсем вырăнсене тухса яланах кирлĕ сĕнӳсем вăхăтра паратчĕç. Агрономи наукине пăсса ĕçлекенсене çийĕнчех вырăна лартатчĕç. Паян вара районта та, ытти тĕрлĕ шайра та мĕн чухлĕ çĕнĕрен чиновник! Кам кăна çук пулĕ вĕсен йышĕнче? Унчченхи вăхăтра чиновниксем ытларах сĕнӳсем парса пулăшнă пулсан, паянхисем укça сăптăраканнисем пулса тăчĕç: укçасăр пĕр хут татăкки те илеймĕстĕн!

Пирĕн районти ял хуçалăхĕ аталаннисен шутне кĕрет. Апла пулин те Муркаш енре ял хуçалăх управленийĕ çук. Çакă вăл пирĕн çĕршывра ял хуçалăхĕ çине мĕнле пăхнине тата пирĕн районта ял хуçалăхĕ мĕнле шайра пулнине пĕлтерет тесе шутлатăп.

Хресченĕн уй-хирте ĕçленĕ чухне пусă çаврăнăшне пăхăнса ĕçлесси тĕп вырăнта пулмалла. Пусă çаврăнăшĕ – ял хуçалăх культурисене уй-хирти лаптăксем çинче çулсерен наука вĕрентнĕ пек ылмаштарни. Çак ылмашу органикăллă тата минераллă удобренисемпе тĕрĕс усă курса, суха ĕçĕсене агротехника ыйтнине пăхăнса тĕрĕс пурнăçласа пынипе çирĕпленмелле.

Çакăн пек туса пыни, е пусă çаврăнăшне çирĕп пăханни кăна, çĕр пулăхлăхне ӳстернипе пĕрлех çум курăкĕпе, сиенлĕ хурт-кăпшанкăпа тата тĕрлĕрен чир-чĕрпе эффективлă кĕрешме май парать. Фермерпе вăл е ял хуçалăх предприятийĕ, е çĕр çинче ĕçлекен ытти харпăрлăх формиллĕ организаци – пурин те пусă çаврăнăшне пăхăнса ĕçлесси саккун вырăнĕнче пулмалла.

Пусă çаврăнăшне çирĕп пăхăнса ĕçлемесен епле-ха çĕр пулăхлăхне сыхласа хăварма тата ӳстерме пулать? Паллах майĕ çук. Хальхи вăхăтра фермерсем кăна мар, сыхланса юлнă ял хуçалăх предприятийĕсен ытларах пайĕ те пусă çаврăнăшне пăхăнса ĕçлемест. Вĕсем ытларах пĕрчĕллĕ культурăсем çеç акса-туса илеççĕ. Пăрса йышши тата пропашной культурăсен лаптăкĕсем çулсерен чакса пыраççĕ. Органикăллă удобренисем пирки калас та килмест. Енчен те хăй çитĕнтернĕ ял хуçалăх культурисене вылăх-чĕрлĕх витĕр кăларса ытларах тупăш илессишĕн тăрăшмасть пулсан, хăй усă куракан çĕрсене органикăллă удобренисемпе апатлантармасть пулсан мĕнле фермерха вăл? Çак ĕçсене вăхăтра пурнăçламанни çĕр пулăхлăхне çаратни пулать вĕт-ха!

Кăшт маларах вăхăтра çулсерен районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче 3–4 пин гектар çинче йӳçек çĕрсене извеçлеттĕмĕр, пиншер гектара фосфор çăнăхĕ сапса хăвараттăмăр. Хĕл кунĕсенче компост тума Атăл урлă торф турттараттăмăр. Патшалăхăн çакçене пурнăçлама укçа та пурччĕ. Ĕçленине кура ял хуçалăх культурисен тухăçĕ те çултан-çул ӳссе кăна пыратчĕ. Çакăнпа пĕрлех çĕр пулăхлăхĕн кăтартăвĕсем лайăхланни те куç кĕретчĕ. Халĕ вара ним валли те укçа çук. Апла пулин те миллиардерсемпе миллионерсен шучĕ çулсерен ӳссе кăна пырать. Çакна мĕнле ăнланмалла-ха?

Манăн пĕр тĕслĕх илсе кăтартас килет. 1909 çулта Хусан кĕпĕрнине кĕрекен Козьмодемьянск уезднче пирĕн район территорийĕнчи Калайкассипе Çеçмер ялĕсем хушшинче Чăваш çĕр-шывĕнчи пĕрремĕш опытлă уй уçнă. Çак лаптăкăн ячĕ те Козьмодемьянск уйĕ ятлă пулнă. Асăннă сăнавлă лаптăк 40 теçеттин йышăннă. Унта виçĕ çул ĕçленĕ. Вĕсене патшалăх укça парса тытса тăнă. Кунта тĕрлĕрен сăнавсем, опытсем иртнĕ. Ăна пурнăçлакансем агрономи наукине аталантарас тесе кăсăкланни паллă. Çĕр çул каяллах сăнавлă майсемпе пусă çаврăнăшне пăсса пĕрчĕллĕ культурăсен ытларах акса туса илни çĕр пулăхлăхне пĕтерсе пыни пулнине палăртнă. Эпир вара паянхи кун та кирлĕ пĕтĕмлетӳсем тума е тăн çитерейместпĕр, е паянхи кунпа çеç пурăнатпăр. Уйрăмах фермерсем.

Хăй вăхăтĕнче тĕрлĕрен пусă çаврăнăшĕпе усă куратăмăр. Вĕсен шутĕнче: уй-хирти, фермăсем çывăхĕнчи, эрозипе кĕрешмелли т. ыт. те. Эрозипе кĕрешес ĕçре усă куракан пусă çаврăнăшĕ пирĕн çĕрсене шыв-шур çурса каясран сыхлатчĕ, тавралăха илемлететчĕ. Шел пулин те çак ĕç те халĕ манăçа тухрĕ.

Юлашкинчен манăн çапла калас килет. Тивĕçлĕ органсен çĕр çинче вăй хуракансенчен агрономи наукине пăхăнса ĕçлесси пирки çирĕпрех ыйтмалла. Çĕре аннепе танлаштаратпăр пулсан сăмахпа мар, ĕçпе хĕрхенесчĕ те юратасчĕ ăна. Çĕр вăл – пирĕн пуянлăх. Ăна пулас ăрусем валли те упраса хăварасчĕ.

**П. ВОРОБЬЕВ.**

Мăн Сĕнтĕр сали.

**Фермăра ĕçлекенсен пĕрлехи кунĕнчен**

# Алă усса лармаççĕ

Пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче районти ял хуçалăх производство кооперативĕсенчи обществăлла вылăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсен пĕрлехи кунĕ иртрĕ. Район администрацийĕн ответлă специалисчĕсем çак кун кашни хуçалăхри фермăнах çитсе курма тăрăшрĕç. Пĕтĕмлетсе çапла калама пулать: пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем паян вылăх апачĕ çуккипе аптăрамаççĕ, анчах хăш-пĕр хуçалăхсенче ĕçлекенсем çуккин ыйтăвĕ çивĕч тăрать. Тĕслĕхрен, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхĕн Çурлатринчи ĕне фермине паян ферма заведующийĕ çукки, ĕне сăвакансемпе пăру пăхакансем çитменни, хуçалăхра зоотехник çукки – тĕреклĕ аталану çулĕ çинчи хăйне евĕр чăрмав. Кунпа пĕрлех фермăра санитари ыйтăвĕпе кая юлмасăр ĕçлемелли те пайтах.

«Ударник» федераллă патшалăх унитарлă предприятийĕнче те обществăлла вылăх-чĕрлĕх апачĕ çителĕклĕ. Фермăсенче ĕçлекенсем çитсе пынăран тата специалистсем хăйсен ответлăхне туйнăран сарайсенче санитари лару-тăрăвĕ лайăх. Паян кашни фермăрах сарайсем таврашĕнчи тата витесен çивиттийĕсенчи юра тасатассипе ĕçleme пуçланă.

Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри вылăх-чĕрлĕх отраслĕ тĕлĕшпе те район администрацийĕн ответлă специалисчĕсен пăшăрхану çук. Кунта паян ĕне пуçне 17 килограмм сĕт сăваççĕ. Продуктивлăха çак шайра тытса пыма рациона пăхăнса пыни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кунти ĕнесен рационĕнче паян концентрачĕ те, сенажĕпе утти те, ытти хушма апат та çителĕклех. Ферма ĕçченĕсем пĕрле пулса çурхи шывшура хатĕрленеççĕ.

Ĕçсем майĕпен пыраççĕ пулин те 2 кун тислĕк тухманни Чапаев яч. хис. хуçалăхĕн Отарккари ĕне ферминчи пĕтĕмĕшле ӳкерчĕке пăсрĕ. Çав вăхăтрах Ильич яч. хис. хуçалăхĕн Уйкас Янасалти ĕне ферминче пĕр-ик кун каялла çеç апат валеçекен çĕнĕ трактор ĕçлеме пуçланă. Юсавçăсен бригади хĕл кунĕсенчех ĕнесем валли апатлану сĕтелĕ тума пуçлани те кунта ыранхи кунпа пурăнни пирки калать.

Вылăхсене хĕл каçарассипе хыçа юлнă 5 уйăха тишкерсен кăçал «Герой», Ильич яч. хис., «Свобода», Суворов яч. хис., «Ударник», Чкалов яч. хис., «Путь Ильича» хуçалăхсем иртнĕ хĕл тапхăрĕнчинчен ăнăçлăрах ĕçлени курăнать. Вĕсемпе пĕрлех «Передовик» хуçалăхра та кăçалхи хĕл кунĕсенче аш-какай туса илессине çултaлăк каялланхинчен 174,5 процент ӳстерме тăрăшулăх çитернĕ.

– Хамăр тăрăшулăх çумне патшалăх пулăшăвне хушсан аталану çулне алăран вĕçертместпĕрех. Пĕлтĕрхи çу кунĕсенче тăрăшсах вылăх апачĕ янтăларăмăр. Çĕнĕлĕхсене пурнăça кĕртме нумай сарайĕнче юсав ĕçĕсем ирттертĕмĕр. Хуçалăх ĕçченĕсем çакăнта алă усмании пире савăнтарать, – терĕ ăратлă вылăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ-заводăн ертӳçи В. Ананьев.

...Кашнийĕнех хăйĕн ыйтăвĕсем, ĕмĕчĕсем. Вĕсене вара пĕрле пулсан çеç татса пама май пуррине те хуçалăхсенче паян кашниех курса-пĕлсе тăрать.

**А. БЕЛОВ.**

**Мăн кун уявĕ умĕн**



# Асăрханакана Турă та упрать

Ирĕке кайнă вут-çулăм шелсĕр. Вăл туххăмрах хăй хыççăн шĕл кăвар хăварса пурăнмалли çурт-йĕре, хушма хуралтăсене, пурлăха илсе тухса каять. Унран та ытларах инкек вăл – пушарта çынсен пурнăçĕ вăхăтсăр татăлни. Халĕ калани кашниншĕнех паллă, анчах пушар хуралĕнче тăракансем час-часах пулăшăва васкани çынсем хăйсем нумай чух пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни çинчен калаççĕ. Пĕтĕмĕшле лару-тăру пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнасси çине пысăк тимлĕх уйăрмалли пирки калать. Апла пулин те...

Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕнче службăра тăракансем кирек хăш вăхăтра та пуç çĕкленĕ пушарпа кĕрешме хатĕр. Çак тимлĕх хăйсеннипе пĕрлех халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ объекчĕсенче те çуллĕ шайра пултăр тесе пушарнăйсем час-часах унта е кунта вĕрентӳсем ирттереççĕ.

Акă пуш уйăхĕн 26-мĕшĕнче ирлесех пушарнăйсем Муркаш чиркĕвĕнче çывхаракан Мăн кун уявĕнче «хĕрлĕ автанран» сыхланассипе анлă вĕрентӳ ирттерчĕç. Пушарнăйсем вĕрентӳре чиркӳре ĕçлекенсене инкек сиксе тухас пулсан мĕн тата мĕнле йышăнусем тумаллипе, пушара сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе епле усă курмаллипе паллаштарчĕç.

Пушарнăйсем условнăй пушара епле сӳнтернипе тата инкек тӳсекене çăлассипе туса ирттерекен ĕçсемпе ăнланмалла паллаштарчĕç.

**А. БЕЛОВ.**

# Çур акине çапла хатĕрленетпĕр

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ÇУРТРИ ВĂРЛĂХĔН ПАХАЛĂХĔ МĔНЛЕ ПУЛНИНЕ КĂТАРТНИ**

**(ака уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне)**

**Колонкăсенче: 1. Тĕрĕсленĕ (центнерпа). 2. Кондициллĕ вăрлăх (процентпа). 3. Кондицие ларман вăрлăх пĕтĕмпе. 4. Вăл шутран тасалăхпа. 5. Çум курăк вăррисемли (центнерпа). 6. Тырă алассипе ĕçлекен бригадăсем.**

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 1200 | 54 | 550 | 550 | 550 | 1 |
| «Восток» | 1200 | 100 | 0 | 0 | 0 | – |
| «Герой» | 1706 | 81 | 317 | 175 | 0 | 1 |
| Ильич яч. хис. | 3050 | 49 | 1550 | 1550 | 1550 | 2 |
| «Путь Ильича» | 1290 | 100 | 0 | 0 | 0 | – |
| «Моргаушская» | 500 | 60 | 200 | 200 | 200 | – |
| «Оринино» | 2207 | 80 | 439 | 439 | 439 | – |
| «Передовик» | 1198 | 100 | 0 | 0 | 0 | – |
| «Свобода» | 2472 | 73 | 658 | 658 | 658 | 1 |
| Суворов яч. хис. | 2510 | 94 | 140 | 140 | 0 | 1 |
| «Ударник» | 3131 | 82 | 561 | 561 | 0 | – |
| Чапаев яч. хич. | 1175 | 100 | 0 | 0 | 0 | – |
| Чкалов яч. хис. | 1150 | 0 | 1150 | 1150 | 1150 | 1 |
| «ДаАн» | 300 | 0 | 300 | 300 | 300 | – |
| «Колос» | 300 | 100 | 0 | 0 | 0 | – |
| Мичурин яч. хис. | 891 | 11 | 791 | 791 | 791 | – |
| КФХ Петрова И. В. | 130 | 100 | 0 | 0 | 0 | – |
| КФХ Толстов А. И. | 500 | 0 | 500 | 500 | 0 | – |
| КФХ Бархаткин В. В. | 1300 | 91 | 120 | 120 | 0 | 1 |
| КФХ Трепнев А. А. | 500 | 100 | 0 | 0 | 0 | 1 |
| КФХ Серафимов П. Ф. | 50 | 100 | 0 | 0 | 0 | – |
| КФХ Горбунов | 600 | 100 | 0 | 0 | 0 | 1 |
| ООО «ВаСем» | 920 | 0 | 920 | 920 | 920 | 1 |
| ООО «Гея» | 250 | 0 | 250 | 250 | 250 | – |
| ООО «Бездна» | 250 | 60 | 100 | 100 | 100 | – |
| **РАЙОНĔПЕ** | **28780** | **70** | **8546** | **8404** | **6408** | **11** |

Çурхи шыв вăйлăрах аннă май çурхи ака-суха вăхăчĕ те кунсерен çывхарать. Ĕçсен вăр-варлăхĕ, вĕсене вăхăтра пурнăçлама тăрăшни тата паха вăрлăх хатĕрлесе маларахах пысăк тухăç никĕсне хывса хăварни хресченшĕн пĕлтерĕшлĕ. Ака уйăхне кĕтĕмĕр. Сисмĕпĕр те – çур аки ума тухĕ. Çывăхри çак ответлă тапхăра эпир уйрăмах паха вăрлăх янтăлассипе паян епле хатĕр-ха? Хуравĕ çӳлерех илсе кăтартнă таблицăран аван курăнать. Вăрлăхăн пысăк пайĕ тасалăхпа ака кондицие ларманни хуçалăхсем иртнĕ çул гербицидсемпе япăх ĕçленине тата вырма вăхăтĕнче йĕтемсем çинчи ĕçе япăх йĕркеленине кăтартать. Паян вара хывса хăварнă вăрлăх çĕр ĕçченĕн чунне туллин тивĕçтереймест. Çав вăхăтрах паян хуçалăхсен вăрлăх улăштарассипе çанă тавăрса ĕçлесчĕ. Ку ĕçе те кая хăварас марччĕ.

Кондициллĕ вăрлăх 70 процента çитрĕ. Çав вăхăтрах эсир таблицăра 9 хуçалăхра янтăланă вăрлăх пĕтĕмпех ака кондицине тивĕçтерет пулсан, çакă вăрлăх хатĕрлессипе пурте çывăрманни не çирĕплетет.

Çанталăк уяр та хитре, ăшă тăрать. Ку вăхăт вăрлăх аласа ăна кондицие лартма питех те меллĕ. Пĕлтĕр çак тапхăра кондициллĕ вăрлăх хуçалăхсенче 79 процент пулнă пулсан, кăçал ку енĕпе ĕçлемелли уйрăмах чылай иккенни куç умне тухать. Çакна ăнланса паян вăрлăх алас ĕçсем Ильич яч. хис., «Герой», Чапаев яч. хис., Чкалов яч. хис., Суворов яч. хис., «Свобода» пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе В. Бархаткинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче кăна пыраççĕ.

Умра тăракан тепĕр ыйту вăл – элитăллă паха вăрлăх туянасси. Ăна хамăр районтах туянма пулать. Çавна валли Ильич ячĕпе хисепленекен, «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе, В. Бархаткинăн хресчен (фермер) хуçалăхĕпе çыхăнма сĕнетĕп. Çак çулпа кайса пĕр тонна паха вăрлăх акса ӳстерсен 2 çул хушшинче хуçалăхри вăл е ку культурăн пĕтĕм вăрлăхне элитăна лартма пулать.

Паян районта аталану питомникĕнчи суперэлита вăрлăх пĕтĕмпе 3,2 процент, элитăллă вăрлăх пурĕ 13,64 процент, 1-мĕш репродукцилли – 24,9 процент, 2-мĕш репродукцилли – 18,2 процент, 3-мĕш репродукцилли 6 процент пулсан, массăллă тата сортсăр вăрлăх – 21,8 процент. Паянхи вăхăтра «Вăрлăхпа ĕçлесси çинчен» федераллă саккун акара паха вăрлăхпа çеç усă курма сĕнет.

Çур акичченхи вăхăтпа хуçалăхсенче туллин усă курса юласа, тивĕçлĕ йышăнусем тăвасса шанатăп.

**А. ПОПОВ,**
**ЧР «Россельхозцентр» ФГБУ филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

# Чăкăртăш арçын. Е пурăнма пĕлместпĕр?

## Пурнăçран

Ялта пĕр-пĕрне пулăшмасăр пулмасть, анчах та ытларах чухне пулăшнăшăн чей мар, эрех ĕçтересçĕ çав. Хул-çурăма каймалăх тенипе вара çырлахакан сахал. Енчен енне сулăнса утсан тин хăйсене лайăх туйма пултарассĕ пулас ун пеккисем. Сулăнса килсе çывăрсан юрать-ха. Хăшĕсен юн «вĕресе» каять те, ниçта чикме пĕлмен вăйĕне килтисем çине ярасçĕ. Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи пĕр кăра çилĕллĕ арçын та çакăн йышшисенченех.

Пĕлтĕр хĕл лариччен пулнă-ха ку ĕç. Çавăн чухне ăна пĕлĕшĕ вутă татса пулăшма ыйтнă. Яланлăх ĕç вырăнĕ пулман Васли (ятне улăштарнă) килĕшнĕ: «Ма пулăшас мар, хама та пулăшу кирлĕ пулĕ»...

Ĕç хыççăн касхи тăватă сехет тĕлнелле арçын киле таврăнать. Мăшăрĕ çав кун шăпах ачин çуралнă кунĕ пулнăран уяв сĕтелĕ валли апат-çимĕç пĕçернĕ. Анчах та сĕтел тавра çемьепе ларса шăкăл-шăкăл калаçса апатланасси пулмасть çав. Сисмен хушăрах арăмĕпе упăшки хирĕçсе каяççĕ. Арçын татах хĕрсе каять: питрен те пĕрре мар çапать. Упăшки хĕненине чăтаймасăр хĕрарăм макăрса кил картине тухса тарать. Арçын вара ним пулман пек çывăрма кĕрсе выртать.

Ирпе тăрсан арăмĕн пичĕ-куçĕ шыçса тухнине курсан упăшки ĕнер мĕн пулнине «аса илет». Каçару ыйтать. Тӳсĕмлĕ хĕрарăм полицие пĕлтермест.

Анчах та лăпкă пурнăç нумая пымасть: декабрĕн 1-мĕшĕнче çак çемьере каллех хирĕçӳ тухать. Васçли, ĕçсем пур тесе, кăнтăрлаччен Москакассине тухса каять. Кăнтăрла иртсен вăл арăмĕ патне шăнкăравлать. Ачасене садикран илсе килме ĕлкĕрейместĕп тесе çак ĕçе арăмне хушать. Хĕрарăм та ерçейменни пирки калать.

Ача садне кайиччен малтан упăшки киле кĕрсе тухать. Садикран ачисемпе таврăннă хыççăн вара каллех «вăрçă» пуçланать. Ку хутĕнче хĕрарăма хытăрах лекет.

Пĕрре мар çапла пулчĕ тесе хĕрарăм полицие шăнкăравлать. Арçын тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçараççĕ...

**Пичете Шалти ĕçсен министерствин районти уйрăмĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

## Спорт

# Шашкăлла выляма

Ĕç коллективĕсен спартакиади шучĕпе апрелĕн 7-мĕшĕнче шашкăлла выляссипе ăмăрту иртет. Унта районти ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен тата ытти тăрăхĕсен командисене чĕнеççĕ.

Командăра 3 арçынпа 1 хĕрарăм пулмалла. Ăмăрту район администрацийĕн методика пӳлĕмĕнче 10 сехетре пуçланать.

**Хамăр инф.**

# Ăмăртуран – çĕнтерӳпе

Сосновка поселокĕнче мартăн 28-мĕшĕнче «Олимп шанчăкĕсем» уçă ăмăрту иртнĕ. Унта пирĕн районти В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕнчен те хутшăннă.

2001–2002 çулсенче çуралнисен ӳсĕмĕнче ăмăртнă Сергей Белов 1 çухрăмлă дистанцие тантăшĕсенчен хăвăртрах вĕçлеме пултарнă: 3 минут та 18 çеккунтра финиша çитнĕ. Спортри пĕрремĕш утăмсене Сергей ашшĕ ертсе пынипе тунă, халĕ вара спорт шкулĕн Муркашри уйрăмĕнче ăсталăхне ӳстерет. Сергея çĕнтерӳпе саламласа малашне те ӳсĕмсем тума сунатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Тав тăватпăр

Пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче эпир, ырă йăлана малалла тăсса, хамăрăн хуçалăха нумай çул ертсе пынă, вырăнти ялсен аталанăвне пысăк тӳпе хывнă, ĕçри хастарлăхпа Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ят илнĕ Алексей Николаевич Иванова асăнса Шурча шкулĕн спорт залĕнче спартакиада ирттертĕмĕр. Пуçланă ĕçе ăнăçлă йĕркелеме тĕкĕ панăшăн эпир паян хуçалăх ячĕпе район администрацийĕн пуçлăхне Р. Тимофеева, унăн пĕрремĕш çумне, ял хуçалăх пайĕн ертӳçине В. Калинина, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн çумне В. Вязова, Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне В. Голубева, выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци ертӳçине Н. Яковлева, «Поддержка» страхлакан патшалăх компанийĕн Муркашри представительствин пуçлăхне Ф. Кирпичникована, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалистне В. Петрова, В. Бардасовăпа А. Сядарова тата М. Романов индивидуаллă предпринимательсене, ЧР армрестлинг Федерацийĕн председательне, физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченне И. Смоленцева, Шурча шкулĕн директорне Л. Кудашовăна, Шуркассинче пурăнакан А. Троицкийпе А. Андрианова ăшă кăмăлпа чĕререн тав тăватпăр. Эсир пире пулăшни сирĕншĕн харама ан кайтăр.

**«Герой» хуçалăх правленийĕ.**

* * *

44 çул пĕрле пурăннă юратнă мăшăра, ытарайми аннене, ырă кăмăллă, çепĕç чунлă кукамая, Тивĕш ялĕнче пурăннă Александра Николаевна Петровăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, чăтма çук йывăр хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн Шетмĕпуç ял администрацине, ĕçтешсене, тăвансене, пускилсене, ял-йыша чун-чĕререн тав тăватпăр.

**Мăшăрĕ, пилĕк хĕрĕ, мăнукĕсем.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:220501:118, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Карманкасы, ул. Озерная, дом 25 для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:072501:1519, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:072501 для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6572 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1243, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

| | среда 4 апреля | | | | четверг 5 апреля | | | | пятница 6 апреля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -1 | -1 | +2 | -2 | -2 | 0 | +2 | +7 | +8 | +2 | +4 | +1 |
| Давление мм | 742 | 745 | 749 | 750 | 752 | 751 | 745 | 740 | 739 | 743 | 747 | 748 |
| Влажность % | 81 | 77 | 72 | 82 | 85 | 73 | 92 | 84 | 93 | 80 | 61 | 77 |
| Ветер м/сек | 9 | 8 | 5 | 3 | 3 | 2 | 6 | 6 | 8 | 7 | 3 | 3 |
| | З | З | З | З | Ю-З | Ю-В | Ю-В | Ю-З | Ю-З | С-З | С | В |
| Солнце восход / заход | | 06:13 | 19:37 | | | 06:10 | 19:39 | | | 06:08 | 19:42 | |
| Луна восход / заход | | 16:42 | 04:52 | | | 18:10 | 05:10 | | | 19:40 | 05:29 | |

## Объявления

**Постановление главы Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики от 02.04.2012г. № 4**

**О проведении публичных слушаний по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со ст.28 Федерального Закона РФ от 06.10.2003г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Юнгинского сельского поселения Моргаушского района

**постановляю:**

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 12 апреля 2012 года в 17 часов 00 минут в здании администрации Юнгинского сельского поселения по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Юнга, улица Малые Чуваки, дом 34 (проект прилагается).

2. Настоящее постановление подлежит опубликованию в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Глава Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики В.В.ФОМИН.**

**Проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального Закона от 25 октября 2001 года № 137-ФЗ «О введении в действие Земельного Кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний администрация Моргаушского района Чувашской Республики **постановляет:**

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:080403:124 из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, село Юнга, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:080403, общей площадью 49 кв.м. с «для строительства торгового ларька» на «для строительства магазина».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 ч., кроме выходных дней. Последний день приема предложений 12 апреля 2012 года до 17-00 часов.

* * *

**ПРОТОКОЛ**

**публичных слушаний по изменению разрешенного использования земельного участка**

02 апреля 2012 года. Начало в 10 часов 00 минут по московскому времени.

Здание администрации Большесундырского сельского поселения, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Б. Сундырь ул. Советская д.16.

Присутствовали:

Президиум: Лаптев А.В. – глава администрации Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

Далее по списку: (см. приложение).

Повестка дня:

Об изменении вида разрешенного использования земельного участка с кадастровым номером 21:17:060401:568

Лаптев А.В. – открыл публичные слушания.

Слушали:

Лаптев А.В.- сообщил о поступившем заявлении от Ивановой Риммы Николаевны с просьбой об изменении вида разрешенного использования земельного участка с кадастровым номером 21:17:060401:568 из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Республика Чувашия, район Моргаушский, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, улица Советская, с разрешенного использования «для содержания и обслуживания зданий и сооружений» общей площадью 142 кв.м. на «для строительства и содержания зданий и сооружений».

Решили:

1. Одобрить проект постановления по изменению вида разрешенного использования земельного участка.

2. Результаты публичных слушаний в течение 7 дней опубликовать в газете «Знамя победы» и на сайте администрации Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

Лаптев А.В подвел итоги публичных слушаний, объявил их закрытыми.

**Председатель публичных слушаний - глава администрации Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики ЛАПТЕВ А.В.**

**Секретарь публичных слушаний – специалист-эксперт ВОЛКОВА В.И.**

**Приложение к протоколу публичных слушаний от 02.04.2012 г.**

**СПИСОК**

**лиц, принявших участие на публичных слушаниях по изменению вида разрешенного использования земельного участка 02 апреля 2012 года.**

1. Матвеева Ирина Владимировна
2. Захарова Галина Михайловна
3. Бочкарёв Дмитрий Михайлович
4. Шуляева Зинаида Петровна
5. Иванова Римма Николаевна

* * *

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070101:85, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5889 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

* * *

**В объявлении собственника земельной доли Капустин Г. И. о выделении земельного участка в счет земельной доли, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 20 ноябрпя 2010 года в № 97 (7839), стр. 4, во 2 колонке, в 10 абзаце, допущена опечатка. Вместо «Капустин Г.И.» следует читать «Капустина Г.И.».**


Магазин «ОТДЕЛОЧНИК» продает:
Цемент – 190 руб.
Утеплитель «РОКАЛИТ»
8,64 кв.м. – 580 руб. 5-10.
Доставка. Тел.: 8-903-322-59-69.

Торговый Комплекс "ТЕРМИНАЛ"
КИРПИЧ
ГАЗОБЕТОН / ГАЗОСИЛИКАТ
более 500 видов
Тел: (8352) 30-55-10, 73-84-12 www.terminaltk.ru
ЧР, г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продается сено (огородн.) в д. Вурманкасы Оринин-ского сельского поселения. Тел.: 8-905-342-57-91.**

* * *

**СПК ПЗ «Свобода» приглашает на работу механизаторов на трактора Т-150К. Оплата достойная. Справки по тел.: 62-6-70, 8-952-029-80-03. 1-2.**

* * *

**Магазин «Сельхоззапчасти» реализует: запасные части к тракторам и сельхозагрегатам. Адрес: д. Юнгапоси. Тел.: 8-937-372-02-15, 8-927-859-69-93. 1-16.**

* * *

**Сумалли качака тата качака путеккисем сутатăп. Тел.: 8-906-130-57-15.**

* * *

**Пĕрре пăрулана шăши тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-865-00-96.**

* * *

**Пиллĕк пăрулана хура тĕслĕ ĕне сутатпăр. Хакĕ калаçнă тăрăх. Тел.: 8-927-991-43-12.**

* * *

**В с. Моргауши требуются автомойщики, шиномонтажники, автослесари. Зарплата достойная. Предоставляется общежитие. Тел.: 8-927-844-78-33. 2-2.**

* * *

**Куплю 2 прицепа 2ПТС-4, б/у. Звонить по тел.: 8-906-38-88-000, 8-905-029-65-79. 1-2.**


ОКНА рамы
пластиковые, алюминиевые входные и межкомнатные двери
салон продаж ПОТАП

Москитная сетка в подарок
Монтаж по ГОСТу
Гарантия 10 лет
Рассрочка
Успей купить окна и двери по выгодным ценам!
тел.(8352)44-57-51, 8-919-663-09-55


**О проведении конкурсного отбора начинающих субъектов малого и среднего предпринимательства для размещения в Производственном бизнес-инкубаторе с.Моргауши Моргаушского района.**

Управляющая компания МУП «Рынок «Моргаушский», находящаяся по адресу: с. Моргауши, ул.Чапаева, д.44а объявляет о проведении конкурсного отбора начинающих субъектов малого и среднего предпринимательства для размещения в Производственном бизнес-инкубаторе с.Моргауши Моргаушского района.

Для участия в конкурсном отборе допускаются юридические лица, индивидуальные предприниматели своевременно представившие конкурсную заявку, надлежащим образом оформленные документы, а также выполнившие все требования, предусмотренные условиями конкурса.

Для участия в конкурсе претенденты подают конкурсную заявку, запечатанную в конверт, представляющую собой комплект следующих документов:

заявку на участие в конкурсе;

копии учредительных документов и документа о государственной регистрации - для юридических лиц;

свидетельство о государственной регистрации предпринимателя, осуществляющего свою деятельность без образования юридического лица - для индивидуальных предпринимателей;

утвержденный претендентом бизнес-план, направленный на производственную деятельность;

копии бухгалтерской отчетности за предыдущий год и истекший квартал текущего года, заверенные территориальным органом Федеральной налоговой службы по месту государственной регистрации претендента;

подтверждение территориального органа Федеральной налоговой службы по месту государственной регистрации претендента об отсутствии просроченной задолженности по платежам в бюджет и внебюджетные фонды, в том числе по штрафам и финансовым санкциям;

подтверждение финансового отдела администрации Моргаушского района Чувашской Республики об отсутствии просроченной задолженности по ранее предоставленным из республиканского бюджета Чувашской Республики и местных бюджетов средствам, выданным на возвратной основе.

Указанные документы скрепляются подписью и печатью претендента либо личной подписью индивидуального предпринимателя с обязательным указанием реквизитов свидетельства о государственной регистрации и идентификационного номера налогоплательщика. Форму заявки можно получить у Управляющей компании МУП «Рынок «Моргаушский» нарочно и в электронном виде. Прием документов на участие в конкурсе осуществляется с 21 марта 2012 года.

Весь пакет документов представляется не позднее 23 апреля 2012 г. в Управляющую компанию МУП «Рынок «Моргаушский» по адресу: с. Моргауши, ул.Чапаева, д.44а, тел. 63-3-45.

Конкурс состоится 26 апреля 2012 года в 10.00 часов в зале заседаний Производственного бизнес-инкубатора с.Моргауши Моргаушского района по адресу: с.Моргауши, ул. 50 лет Октября, д.25.

Цена за 1 кв. м. производственного помещения – 50 руб., за 1 кв. м. офисного помещения – 190 руб.


Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 1-10.

Мебель на заказ: диваны, кровати, шкафы, кухонные гарнитуры, стенки, прихожие, детская мебель. Кредит, рассрочка. Адрес: с. Моргауши, «Салон мебели» (напротив магазина «Визит»). Тел.: 8-900-330-72-60, 8-9927-847-50-77. 6-10.


Районти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн «Моргаушское» муниципаллă унитарлă предприятийĕ кунта тĕп бухгалтер пулса ĕçлекен Ф.Н. Садовниковăн ашшĕ

**Николай Прокопьевич БАШКИРОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

«Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн коллективĕ хуçалăха чылай вăхăт ăнăçлă ертсе пынă

**Владимир Константинович ТЮРИН**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**

Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.

ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрах хисене йышăнмаççĕ.

Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 03.04.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4633.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.